чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

5 /26411/№ Юн кун, 2014, кăрлач (январь), 15 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Пичет кунне кăрлачăн 18-мĕшĕнче уявлатпăр

***Чăваш Республикин журналисчĕсем 2014 çулта Раççей тата Чăваш пичечĕн кунне кăрлачăн 18-мĕшĕнче К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче паллă тăваççĕ.***

Çак кунхине савăнăçлă уяв тата курав иртĕç /9 сехетре пуçланать/, унта Чăваш Енри массăллă информаци хатĕрĕсем тата карас çыхăнăвĕн операторĕсем хăйсен çитĕнĕвĕсене кăтартĕç, вĕсем çинчен каласа парĕç. 11 сехетре уяв концерчĕ пуçланать. Массăллă информаци хатĕрĕсенче ĕçлекенсене, отрасль ветеранĕсене професси уявĕпе республика ертӳлĕхĕ, отрасльсенчи организацисен ертӳçисем саламлĕç.

Чăваш журналистики «Хыпар» хаçата йĕркеленĕ кунран пуçланса кайнă. Унăн пĕрремĕш номерĕ 1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче пичетленнĕ. Хаçат никĕслевçи, редакторĕ – паллă ăсчах-педагог тата общество ĕçченĕ Николай Никольский. «Хыпар» хаçатра наци культурине тата общество шухăш-кăмăлне аталантарас, чăваш халăхне çĕр-шывăн политика пурнăçне явăçтарас ыйтусене анлăн çутатнă. Паян «Хыпар» хаçатăн архивсенчи тĕркисем – революцичченхи чăваш халăх пурнăçĕн тĕкĕрĕ, историпе, этнографипе, тавра пĕлӳ енĕпе тĕпчевсем ирттермелли паха çăл куç.

2013 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнче «Хыпар» Издательство çурчĕ» çумне «Атăл-Волга» Издательство çурчĕ» автономи учрежденипе «Тантăш» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденине пĕрлештерчĕç. Çакă рынок ыйтнисене пĕлсе тăма, конкуренцие хутшăнма пултаракан паха продукци кăларма, пурлăхпа тивĕçлипе усă курма, редакцисен штачĕсене пĕчĕклетме, бюджет тăкакĕсене чакарассине тивĕçтерме май парать.

«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсен тиражĕсем 2013 çул шайĕнчен ӳснине палăртма питех те кăмăллă.

■ **А.ВАСИЛЬЕВА**

## Хамăрăн эмблема пур

***ЧР Культура министерствинче кăçал иртекен Культура çулталăкĕн республика эмблемин чи лайăх эскизĕн конкурсне пĕтĕмлетнĕ. Унта Красноармейски ял тăрăхĕнчи информаципе культура центрĕн художникĕ Александр Казаков çĕнтернĕ. Александр Анатольевич хăйĕн ĕçĕнче чăваш гербĕн элеменчĕсемпе тата чăваш тĕррипе усă курнă.***




Асăннă хăйне евĕр тупăшăва дизайнерсем, графиксем тата аслă шкулсенче ӳнер енĕпе пĕлӳ илекен студентсем хутшăннă. Анчах çичĕ конкурсант хушшинче Александр Казаков кăна профессионал пулнă. Ĕçсене Чăваш Енри Художниксен тата Дизайнерсен союзĕсен членĕсем хакланă. Хаклавра ытларах хăйне евĕрлĕхе, тарăн шухăша, шайлашулăха тата, паллах, чăваш наци культурин уйрăмлăхне çутатнине шута илнĕ. Культура çулталăкĕн эмблеминче «2014» хисепе авалхи сăварпăлхар руна çырулăхĕнчи евĕр хатĕрленĕ. Эмблемăри хĕрлĕ тĕс шухăшлав ирĕклĕхне, йăла-йĕркене упранине кăтартать; сарă – çĕр çинче пурне те пурнăç парнелекен хĕвел тĕсĕ; ылтăнни пуянлăхпа ăнăçулăха палăртать.

Конкурс çĕнтерӳçине Чăваш Республикинче Культура çулталăкĕ уçăлнă ятпа ирттерекен савăнăçлă уявра /вăл Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче кăрлачăн 17-мĕшĕнче пулĕ/ асăнмалăх парнепе чыслĕç. Çак самантран асăннă эмблема Чăваш Республикинчи Культура çулталăкĕн официаллă палли шутланать. Ӳлĕм вăл сувенирсене илемлетĕ, Хисеп хучĕсене, афишăсемпе плакатсене капăрлатĕ.

■ **Р.АНАТОЛЬЕВА**

*Уяв*

# «Карас ан тĕлĕртĕр – çавăнпа çăрттан пур»




***Статья ятне кăларнă сăмахсене Прокуратура ĕçченĕн кунне халалланă уявра ĕнер ЧР шалти ĕçсен министрĕ Сергей Семенов каларĕ. Кам çăрттан, кам карас пулнине чухлама йывăр мар-тăр. Сергей Евстафиевич шӳтлесе те илчĕ: «ШĔМ прокуратура сăнаса тăракан чи пысăк ведомство пулнă май сирĕн «питĕ ăшă тимлĕхĕре» куллен туйса тăратпăр». «Çăрттансем» шӳте ăнланчĕç – министрăн салам сăмахĕсене алă çупса йышăнчĕç.***

Тепĕр тесен ăшă сăмахсем йышлă пулчĕç. Тĕп салам, паллах, республика Пуçлăхĕнчен Михаил Игнатьевран. Вăл прокуратура çын прависемпе патшалăх интересĕсене хӳтĕлекен тĕп институтсенчен пĕри пулнине палăртрĕ. Шăпах çак тытăм çине тăрса ĕçленипе çивĕч те кăткăс ыйтусене татса пама май килет. Михаил Васильевич республикăра ĕç укçин парăмĕ пысăк пулнине аса илтерчĕ – 125 млн тенкĕ таранах капланнă. Прокуратура йышăннă мерăсем ку енĕпе çивĕчлĕхе сирме май панă. Е тата – хваттер тума пая кĕрсе улталаннă çынсен нуши. Паян нумайăшне пурăнмалли кĕтеспе тивĕçтернĕ ĕнтĕ, кунта та «патшалăх куçĕ» тесе хаклакан тытăм йышăннă мерăсен тӳпи тĕп пĕлтерĕшлĕ.

ЧР Пуçлăхĕ вăхăт прокурорсен умне çĕнĕ ыйтусем кăларса тăратнине палăртрĕ. Çав шутра – коррупципе çине тăрса кĕрешесси, терроризмран хӳтĕленесси. «128 халăх ывăлĕхĕрĕ пурăнакан республикăра хивре национализм валли вырăн пулмалла мар», – терĕ Михаил Васильевич.

Федерацин республикăри тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров та прокуратура ытти влаç органĕпе тачă çыхăну тытни Чăваш Ен аталанăвне тĕревлени пирки каларĕ. Саламлакансен, прокуратурăпа алла-аллăн ĕçлекен тытăмсен ытти ертӳçин, сăмахĕсенче те çакнашкал шухăшах янăрарĕ: республика, район-хула прокуратурисен ĕçченĕсем хăйсен тивĕçне яваплăха туйса пурнăçлани куç кĕрет.

ЧР прокурорĕ Владимир Метелин хăйĕн ĕçтешĕсене ăнăçусем, прокуратура ветеранĕсене сывлăх сунчĕ. Ватăсене парнесемпе хавхалантарчĕç. Пĕриншĕн вара, Иван Григорьевшăн, иккĕлле уяв пулчĕ: шăпах ĕнер 90 çул тултарчĕ. Вăрмар районĕн прокурорĕн пулăшуçинчен пуçланăскер хаяр вăрçă çулĕсенче фронтра çапăçса орден-медале тивĕçнĕ, служба карьерине ЧАССР прокурорĕн çумĕнче вĕçленĕ. Ăна тав туса Михаил Игнатьев республика символикиллĕ сехет парнелерĕ /сăн ӳкерчĕкре/. Ветеранăн 100 çулхи юбилейне те пĕрле паллă тума сĕнчĕ.

Прокурорсен паянхи ăрăвĕ те аслă ĕçтешĕсенчен юлмасть. Ĕçĕ яваплă кăна мар – анлă та. 2013 çулта прокурорсем тĕрĕслевсем ирттерсе граждансен прависене пăснин 27 пин ытла тĕслĕхне тупса палăртнă. Саккунсăр 2,5 пине яхăн право актне протестленĕ, судсене 10 пин ытла ыйтупа тавăç тăратнă, саккуна пăснине пĕтерме сĕнсе 4,5 пин ытла представлени çырнă. Прокурорсен йышăнăвĕсене тĕпе хурса должноçри тата юридици вăйĕнчи 1,5 пин ытла çынпа тытăма административлă майпа явап тыттарнă, прокурорсен материалĕсем тăрăх следстви органĕсем 45 уголовлă ĕç пуçарнă.

Çынсен ĕçлевпе тата пурăнмалли çурт-йĕрпе çыхăннă прависене хӳтĕлес енĕпе уйрăмах çине тăрса ĕçленĕ. Ĕç укçин парăмĕпе çыхăннă ыйту пирки каларăмăр, унсăр пуçне те хута кĕмелли ыйту пайтах: 160 çемьен черетсĕр хваттер илмелли правине тавăрнă, пĕчĕк предпринимательлĕх субъекчĕсен прависене хӳтĕленĕ, çут çанталăка сыхлакан саккунсене пурнăçлассине тивĕçтернĕ. Тата – уголовлă суд производствинче граждансен Конституципе пăхнă прависене тивĕçтересси. Малтанхи следстви вăхăтĕнче саккуна пăснăшăн кăна право хуралĕн органĕсен должноçри 600 ытла çыннине дисциплина енĕпе явап тыттарнă /акă вăл – ШĔМ ертӳçи калакан «питĕ ăшă тимлĕх»/.

ЖКХ сфери тĕлĕшпе тимлĕ ĕçленĕ. Граждансен тата бюджет укçине /çав шутра – çынсене юхăннă çуртсенчен куçарма уйăрнине/ вăрланă тĕслĕхсемпе кăна 30 ытла уголовлă ĕç пуçарнă. Вĕсене тĕпченĕ май уголовлă ĕçсен фигуранчĕсем 574 млн тенке хăйсен ирĕкĕпе саплаштарнă, вĕсен 15 млн яхăн тенкĕлĕх пурлăхне арестленĕ.

Ĕçне кура – хисеп, чыс. ЧР Пуçлăхĕн Тавĕ, хисеп грамотисем, аслăрах звани, тава тивĕçлĕ ятсем – вĕсене тивĕçнисен йышĕ пысăк пулчĕ. Наградăланисен шутĕнче тĕрлĕ должноçра ĕçлекенсем: Тамара Шурыгина, Валерий Михайлов, Елена Волкова, Виталий Щетинкин, Любовь Доброхотова, Фаина Крылова тата ыттисем. Саламлатпăр! Массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсене те ЧР прокурорĕн Тав хучĕпе хавхалантарчĕç. Çав шутра çак йĕркесен авторне те – прокуратура органĕсен общество пурнăçĕнчи вырăнĕпе пĕлтерĕшне çутатас енĕпе тăрăшса ĕçленĕшĕн. «Хыпар» хаçат асăннă ĕçе хывакан тӳпене çапла хакланăшăн тавах.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 14-мĕшĕнчи 1-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн ял хуçалăхĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Шупашкар хулинчи "Сувар-2" суту-илӳ предприятийĕ" тулли мар яваплă общество трактористне **Владислав Петрович КСЕНОФОНТОВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ МЕХАНИЗАТОРĔ",** Шупашкар районĕнчи "Атлашевский" ял хуçалăх кооперативĕн машинăпа ĕне сăвакан операторне **Елена Ивановна ИВАНОВĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ЯЛ ХУÇАЛĂХĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят панă.

**КУН хыççăн КУН**
☎ 56-04-26

## Лауреатсем паллă

***Ĕнер республикăри журналистсен хушшинче 2013 çулшăн пултарулăх конкурсĕсен лауреачĕсене палăртнă.***

ЧР Журналистсен союзĕн Çемен Элкер ячĕллĕ премине «Советская Чувашия» хаçат тишкерӳçипе Елена Зайцевăпа Чăвашрадио шеф-редакторĕ Ольга Туркай тивĕçнĕ.

Николай Никольский ячĕллĕ премие 2013 çулшăн никама та памалла мар тесе йышăннă.

«Хыпар» хаçатăн экономика пайĕн тишкерӳçи Юрий Михайлов тата Етĕрне район администрацийĕн тĕп специалисчĕ, РФ Журналистсен союзĕн членĕ Лилия Петрова – Етĕрне район администрацийĕпе ЧР Журналистсен союзĕн Леонид Ильин ячĕллĕ премийĕн лауреачĕсем.

**В.ВАЛЕНТИНОВ.**

## Чăваш йăли-йĕрки пирки – ятарлă кăларăм

***Кăрлачăн 12-мĕшĕнче «Россия К» телеканалпа чăваш йăли-йĕркипе уявĕсене халалланă «Россия, любовь моя!» программа кăтартнă. Кăларăма филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх ĕçченĕ Николай Егоров хутшăннă.***

Нарăсăн 2-мĕшĕнче телеканалта чăваш халăх тумне халалланă иккĕмĕш кăларăм эфира тухĕ. Чăваш эрешĕн хăйне евĕрлĕхĕпе, наци капăрлăхĕпе Геннадий Иванов-Орков искусствовед паллаштарĕ.

Аса илтеретпĕр: ЧР Информаци политикин министерстви чĕннипе республикăра авăнăн 7-12-мĕшĕсенче «Россия, любовь моя!» кăларăма ӳкернĕ. «Культура» телеканал журналисчĕсем Юхмапа Пăла тăрăхĕнче чăваш туйĕнче пулса курнă, чăваш тухйисемпе хушпăвĕсене, музыка инструменчĕсене ăсталас кăткăслăхпа паллашнă. Ку çеç-и? Шӳрпе, хуран кукли пĕçерме хăнăхнă, чăваш тĕррине пахаланă, «Кĕр сăринче» савăннă, «вутта пуç тайнă». «Культура» телеканалта Раççей пирки ӳкернĕ кăларăмсен ярăмĕн авторĕ – Пьер Кристиан Броше француз. Хăйĕн мăшăрĕ тата ачисем çуралнă Раççее лайăхрах пĕлес тесе Пьер Броше Уралта, Чукоткăра, сăртлă-туллă Алтайра, Якутире, Пушкăртстанра, Мордовире пулса вырăнти халăх культурипе, йăлийĕркипе паллашнă.

**А.ГРОМОВА.**

## Олимпиадăсен регионти тапхăрĕ пуçланчĕ

***Кăрлач уйăхĕн 13-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейри шкул ачисен олимпиадин регионти тапхăрĕ пуçланнă. Вăл пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 21 предметпа нарăсăн 8-мĕшĕччен иртĕ.***

Республикăри ăмăртура чи малтанах вĕренекенсем акăлчан чĕлхине еплерех пĕлнине палăртса тупăшрĕç. Асăннă предмета тарăннăн пĕлекенсем кăрлачăн 13-14-мĕшĕсенче И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче 83-ĕн пухăнчĕç. Ют чĕлхесен профилĕпе ĕçлекен 4-мĕш гимназирен (Шупашкар) олимпиадăн хальхи тапхăрне 20 яхăн вĕренекен хутшăннă. Йĕркелӳçĕсем тупăшăва хутшăннисем заданисене пысăк шайра пурнăçланине палăртнă.

Олимпиадăн муниципалитет тапхăрне 7-11 классенче вĕренекен 35 пин шкул ачи хутшăннă. Чи пысăк йыш – математикăпа иртнĕ ăмăртура: 2730 çын. Çĕнтерӳçĕ ятне вĕсенче 81 вĕренекен йышăннă.

**И. ВЛАДИМИРОВА.**

## Депутата шанмаççĕ

***Шупашкар районĕн депутатсен Пухăвĕн депутачĕ пирки – Ишлейри пысăк вольтлă аппаратура завочĕн коммерци директорĕ пулнăскер – тĕлĕшпе Следстви комитечĕн республикăри управленийĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсене тĕпчекен пайĕ уголовлă ĕç пуçарнă.***

Следстви версийĕпе килĕшӳллĕн вăл ултав çулĕ çине тăнă – уйрăмах пысăк виçепе. 2007 çулхи чӳк уйăхĕнче асăннă заводăн коммерци директорĕ пĕр организаципе проект ĕçĕсем пурнăçлама тунă килĕшĕве пурнăçланине ĕнентерекен суя документсем хатĕрленĕ. Вĕсене тĕпе хурса завод çав коммерци предприятийĕн шучĕ çине пурнăçланă ĕçсемшĕн тесе 3 млн тенкĕ куçарса панă. Кайран вара укçана коммерци директорĕ илнĕ, унпа хăй пĕлнĕ пек усă курнă.

Çавна май пысăк вольтлă аппаратура заводне асăннă виçелĕх сиен кӳнĕ. Уголовлă ĕçе малалла тĕпчеççĕ, ăна сиен тӳснĕ ен ыйтса çырнине тĕрĕсленĕ хыççăн пуçарнă.

**Н.ДМИТРИЕВ.**




Паян улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 13, каçхине 16 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 754 мм, сывлăшри нӳрĕк 84 процент.

**Кун тăршшĕ 7 сехет те 35 минут.**

Ыран пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, юр çăвать. Çил хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 12, каçхине 11 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 752 мм, сывлăшри нӳрĕк 87 процент.

**Кун тăршшĕ 7 сехет те 38 минут.**



**ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ**

# ТУРТМАЛЛА-И Е ÇУК-И – КАШНИ ХĂЙ СУЙЛАТЬ...

**Федерацин иртнĕ çулхи нарăс уйăхĕн 23-мĕшĕнчи «Граждансен сывлăхне табак тĕтĕмĕн витĕмĕнчен тата табак туртнă хыççăнхи пулăмсенчен сыхласси çинчен» 15-мĕш саккунĕ ыйтнине пăхăнмашкăн санкцисем кĕртес тĕллевпе иртнĕ çулхи чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕнче ятарлă саккун йышăннă. Асăннă документ пирус мăкăрлантаракансене хирĕçлемест, анчах та туртманнисен ирĕкне хӳтĕлет. Унăн тĕллевĕ – халăх йышлă çӳрекен вырăнсенче çынсене тĕтĕм-сĕрĕм сиенĕнчен сыхласси, çул çитмен çамрăксене никотин инкекĕнчен асăрхаттарасси.**

**Саккуна пăсакансем тĕлĕшпе палăртнă яваплăх вара чăннипех пысăк: ачасене табак продукцийĕ сутнăшăн тӳлеттерекен штраф 3-5 пинрен пуçласа 100-150 пин тенке çитет. Сигаретсем реклама щичĕсем çинчен çухалĕç. Кăçалхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнчен вĕсене лавкка сентри çине кăларма юрамасть. Йытă çимен апатсăр пурăнайманнисене суту-илӳре продукци ятне-шывне тата хакне кăтартнă прайс-лист сĕнĕç.**

**Çӳлерех асăннă саккунпа килĕшӳллĕн вĕренӳ, культура, кану, спорт, медицина учрежденийĕсенче, обществăн мĕн пур транспортĕнче, вокзала, аэропорта, порта, станцие кĕмелли алăксенчен 15 метртан çывăх мар çĕрти усă вырăнта, патшалăх влаçĕн органĕсем йышăнакан çуртсенче, ĕç вырăнĕнче, нумай хваттерлĕ çуртсен лифчĕсенче, ачапăча лапамĕн территори чиккисенче пирус туртма юрамасть. Кăçалхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнчен список татах вăрăмланмалла, инçет çулçӳрев пуйăсĕсем, хăна çурчĕсемпе общежитисем, суту-илӳ центрĕсем, пасар çурчĕсем, общество апатланăвĕн вырăнĕсем тата ытти те кĕрĕç.**

**Туртма юраман вырăнта пирус мăкăрлантаракан граждансем тĕлĕшпе явап тыттармалли мерăсене полици сотрудникĕсемпе пĕрлех Госпожнадзор, транспорт, çул-йĕр инспекторĕсем, санитари врачĕсем тата ыттисем йышăнма пултараççĕ. Тĕслĕхрен, патшалăх çурт-йĕр инспекцийĕн ĕçченĕсем – нумай хутлă çуртсенче, лифтсенче йĕркене пăхăнманшăн, Роспотребнадзор çыннисем – табак продукцине çул çитмен çамрăксене тыттарнăшăн.**

**Пирĕн республикăра пирус туртнине хирĕç кĕрешес енĕпе паха опыт пухнă ĕнтĕ. Федераци саккунĕ вăй иличченех влаç органĕсенче, сывлăх сыхлавĕпе культура, вĕренӳ, спорт учрежденийĕсенче мăкăрлантарма пăрахнă. Кунта, паллах, «Чăваш Ен» фондăн тӳпи пысăк. Вăл пуçарнипе тата ертсе пынипе çак юхăма волонтерсем кăна мар, пĕтĕм общественноç пуçарулла хутшăннă, хутшăнать те. Çакăн усси куç умĕнчех – юлашки вăхăтра пирус тĕтĕмĕсĕр хутлăхсем йĕркеленме тытăнчĕç: хуласенчи уйрăм кафесенче пачах туртма чарнă. Чарнă тени тĕрĕсех мар та пулĕ. Вĕсен хуçисем çак мелпе усă курма тытăнни клиентсен сывлăхĕшĕн тăрăшнипе те çыхăннă: тĕтĕм-сĕрĕм явăнман вырăн ачаллă çемьесемшĕн илĕртӳллĕ. Ун пеккисем – сывă пурнăç йĕркине кăмăллакансем – вара йышлансах пыраççĕ.**

**ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви çумĕнче йĕркеленĕ Табак туртнине хирĕç кĕрешекен координаци канашĕн председателĕн çумĕ Михаил Федотов шухăшĕпе – саккуна пăхăнманнисене явап тыттарни – штраф тӳлеттерни тĕп тĕллев пулма пултараймасть. Табак туртассипе туртас марри пирки кашнийĕн хăйĕн шухăшламалла: сывлăх пуриншĕн те хаклă. Никотинăн пĕчĕк виçиех лашана ураран ӳкерме пултарать теççĕ те этемшĕн вăл çав тери хăрушă пулни каламасăрах паллă.**

**Тепĕр енчен, укçа тĕлĕшĕнчен явап тыттарнин усси те пулассăн туйăнать. Автотранспортпа çӳрекенсене хăрушсăрлăх пиçиххийĕпе хӳтĕленмешкĕн малтанхи вăхăтра сахал мар хистенине, йĕркене пăсакансене айăпланине пурте ас тăваççĕ ахăр. Халĕ хăнăхтарса çитерчĕç вĕт. Паян çăлăнăçăн куллен кирлĕ хатĕрĕ пулса тăчĕ вăл. Пирусран уйрăлайманнисем те вăхăт иртнĕ май сиенлĕ йăларан писесси пирки шухăшласа илеççех.**

**Хальлĕхе вĕсем мăкăрлантараççĕ. Паллах, ĕçре е туртма юраман ытти вырăнта мар, чылай чухне ятарласа уйăрнă çĕрте, çын курман чухне – подъездра, лифтра, общество транспорчĕн чарăнăвĕнче...**

**Ирĕксĕрех ыйтас килет: вокзалсенче е вĕсен çывăхĕнче, автобус-троллейбусра мăкăрлантарма юрамасть тĕк чарăнусенче мĕншĕн турттармалла? Унта та çынсем пур вĕт: çитĕннисем, ватти-вĕтти, шкула, ача садикне васкаканни...**

**Çӳлерех асăннă саккун тăрăх унашкаллисем тĕлĕшпе чару çук иккен. Чăн та ку енĕпе РФ субъекчĕсене тата тепĕр виçĕ вырăнта – общество транспорчĕн чарăнăвĕнче, хуласен хушшинче çӳрекен автобуссене лармалли лапамра тата массăллă мероприятисем ирттернĕ вăхăтра йышăнакан территорисенче – чармашкăн ирĕк панă. Асăннă мелпе Чăваш хутлăхĕнче кăçалхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнчен усă курма тытăнасса шанас килет. Паллах, кунта та «чăпăркка» политики вырăнсăр пулĕ, граждансен хăйсен пуçарулăх кăтартмалла, туртаканнин туртманнин ирĕкне мала хумалла, культурăллă пулса пĕрин теприне хисеплемелле.**

■ **Валентина СМИРНОВА**



# Хушма кӑларӑм
# Тӑван ен

*Чыс*

## Механизатор ӗлӗк хисепреччӗ

***Ҫулсем сисӗнмесӗр иртеҫҫӗ пулин те ачалӑхпа яшлӑхри хаваслӑ самантсем асӑмрах. Пире техника питӗ илӗртетчӗ. Ҫамрӑксем тракториста е водителе йышпа вӗренме каятчӗҫ. Хам та 1971 ҫулта Чӑваш патшалӑх ял хуҫалӑх институчӗн механизаци факультетне пӗтертӗм. Шупашкар районӗнчи пӗр хуҫалӑхра тӗп инженерта ӗҫлерӗм. Техника паркӗ ҫулсеренех пуянланатчӗ. Тырӑ пухса кӗртнӗ вӑхӑтра механизаторсен йышӗ 110 ҫынна та ҫитетчӗ. 150К тата гусеницӑллӑ тракторсемпе икӗ сменӑпа икшерӗн ӗҫлетчӗҫ.***



Ҫӗнӗ самана пуҫлансан вара техника шучӗ чакма тытӑнчӗ, механизаторсем ӗҫ укҫи тивӗҫтерменрен хуҫалӑхран кайма пуҫларӗҫ. Шоркка ялӗнче пӗр вӑхӑтра 40 тракторист уя тухнӑ, халӗ 81 ҫулти Валентин Александровпа 79-ти Георгий Александров ҫеҫ юлчӗҫ.

Г.Александров Ҫатра Хочехмат шкулӗнче 7 ҫул вӗреннӗ хыҫҫӑн 13 ҫухрӑмри Кӳкеҫе пӗлӳ илме ҫӳрет. Ҫулталӑк тӑван хуҫалӑхра тӗрлӗ ӗҫ пурнӑҫлать, кайран Шупашкарти агрегат заводне юсавҫӑ-слесаре вырнаҫать. Ҫав хушӑрах малашне тӑван колхозра ӗҫлес шухӑша пуҫӗнчен кӑлармасть. Ашшӗ уй-хир бригадирӗ, арманҫӑ пулнӑ. Георгий механизатор хисеплӗ професси пулнине шута хурса Сӗнтӗрвӑрринче вӗсене хатӗрлекен курсра вӗренсе алла удостоверени илет.

Ӑна малтанах ДТ-54 кивӗ трактор шанса параҫҫӗ. Вӑл хурҫӑ ута лайӑх юсаса кӗске хушӑрах «ура ҫине» тӑратать. Пур ӗҫе те пысӑк пахалӑхлӑ та тӗплӗ пурнӑҫланӑран тепӗртакран вӗр ҫӗннине шанса параҫҫӗ.

Георгий Александрович хӑватлӑ техникӑна хӗлӗнҫӑвӗн ҫӳретет. Ҫарта танкист-наводчик пулнӑскере вӑл ҫӑмӑллӑн пӑхӑнать. Ана сӳрелет, тырӑ акать, курӑк шӑварать, хӗвел ҫаврӑнӑшпа куккуруса вӗтетсе силоса хывать, ҫӗртме сухалать... Мӗн кӑна тумасть пулӗ!

Мӑшӑрӗпе Раиса Ивановнӑпа вӑл ывӑлпа хӗр ҫитӗнтернӗ. Иккӗшӗ те ашшӗ ҫулӗпе кайнӑ: Юра Шупашкарти пӗр ЖКХ хуҫалӑхӗнче тракторист та, экскаваторщик та. Ольга шкул хыҫҫӑн уй-хир бригадине ертсе пынӑ, халӗ кайӑк-кӗшӗк фабрикинче ӗҫлет.

Георгий Александров тивӗҫлӗ канӑва тухсан та ахаль ларман. Вырма вӑхӑтӗнче йӗтемре сортировкӑпа тырӑ алласа тасатнӑ, склад заведующийӗ те пулнӑ.

Пысӑк тӑрӑшулӑхпа тата ӗҫченлӗхпе палӑрнӑскер 1974, 1975 ҫулсенче «Социализм ӑмӑрту ҫӗнтерӳҫи» палла, «Ӗҫ ветеранӗ» хисеплӗ ята тивӗҫнӗ.

■ **Владислав ПЛАТОНОВ**

*Тӗслӗх*

## Ача чухнех яла савсан...

***Куславкка районӗнчи Куснар ялӗ хӗвел пайӑркисем тӳррӗн ӳкекен сӑрт ҫамкинче вырнаҫнӑ. Кунта юр таврари ялсенчен маларах ирӗлет, ҫӗр хӑвӑрт пиҫет.***

Кашни килте тенӗ пекех ҫынсем теплицӑра пахча ҫимӗҫ калчи, хӑяр, помидор, ир пулакан ҫӗр улми ҫитӗнтереҫҫӗ, пусӑ ҫаврӑнӑшӗнче вырӑн шеллемеҫҫӗ. Тупӑш илес тӗллевпе суту-илӗве Куславккапа Шупашкарта ҫеҫ мар, Хусанпа Мускав таранах йӗркелеҫҫӗ. Хула ҫыннисем вун-вун ҫул хушшинче вӗсене палласа ҫитрӗҫ ӗнтӗ – кӗтекен пулчӗҫ.

Вӗренӳрен пушансан тата ҫу кунӗсенче ачасем пахча ӗҫне аслисемпе пӗрле хастар хутшӑнаҫҫӗ. Куснарта хресчен-фермер тата уйрӑм ҫын хуҫалӑхӗ нумай. Вӗсен ырӑ тӗслӗхӗ вӗренекенсене мӗн пӗчӗкрен тӑван тавралӑха, ҫӗр-аннемӗре юратса, ял илемӗшӗн тӑрӑшса ҫитӗнме хавхалантарать.

Вӑтам шкул та ку енӗпе айккинче тӑмасть. Хими тата биологи вӗрентекен Ольга Васильева ачасене тӗллевлӗ уроксенче ҫӗр ӗҫ культурипе технологи вӑрттӑнлӑхӗсемпе паллаштарать. Ольга Николаевна хӑй ӑс панӑ ҫамрӑксенчен хӑшӗ-пӗри аслӑ шкулсемпе техникумсенче ял хуҫалӑх пӗлӗвне илме хатӗрленнине пӗлтерчӗ.

Район администрацийӗн ял хуҫалӑх пайӗн специалисчӗсем ҫитӗнекен ӑру ялтан ан пистӗр, хӑйсене килӗшекен професси илсе ҫуралнӑ кӗтесрех тӗпленсе пурӑнччӑр тесе аттестат илме хатӗрленекенсемпе вырӑна тухса тӗл пулусем йӗркелеҫҫӗ. Тамара Аликова Куснар шкулӗнче пулса курчӗ. «Шанатӑп вӗсене, – тет Тамара Андриановна. – Ҫитӗнсен чылайӑшӗ фермер е ял хуҫалӑх специалисчӗ пулатех.»

■ **В. ВАЛЕНТИНОВ**



● О.Васильевӑпа Т.Аликова

*Ӑраскал*

## Пурнӑҫӗ вӑрлӑх сӑнасах иртнӗ

***Йывӑр-и е ҫӑмӑл-и вӑл – ҫӗр ӗҫӗ? Ҫакна нумай ҫул тар тӑкса, тыр-пул ӳстерсе курнӑ ҫын кӑна тӗрӗс ӑнланать. Пирӗн мӑн асаттесем мӗн авалтан тӑпра пулӑхне ӳстерме ӑнтӑлнӑ, сӑнавсем иртернӗ, ачисене ҫӗре пӗчӗкренех юратма, вӑрттӑнлӑхӗсене алла илме вӗрентнӗ. Мӗн тери пархатарлӑ та мухтавлӑ вӑл тӑван ҫӗр ҫинче вун-вун ҫул тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлесе халӑх хисепне тивӗҫесси!***

Нина Иванова Ҫӗрпӳ районӗнчи Аслӑ Тивӗшри йышлӑ ачаллӑ хресчен ҫемйинче 1933 ҫулхи чӳк уйӑхӗнче кун ҫути курнӑ. Ашшӗ-амӑшӗ вырӑнти колхозра ырми-канми вӑй хунӑ, ачисене те ӗҫе пӗчӗклех хӑнӑхтарнӑ. Нинук аслисемпе танах тырӑ вырнӑ, утӑ пуҫтарнӑ. Саккӑра пуснӑскерӗн ашшӗне Данил Алексеевича хиртенех вӑрҫа ӑсатнине паянхи пекех ас тӑвать. «Пире, ҫичӗ ачине, пӗрерӗн-пӗрерӗн ҫупӑрласа юратрӗ, куҫӗ шывланнӑччӗ, аннене итлеме тата вӑй ҫитнӗ таран пулӑшма хушса фронта тухса кайрӗ», – аса илчӗ Нина Даниловна.

Ҫав кунран вӑл «атте» сӑмаха урӑх каласа курман. Аслӑ вӑрҫӑ вӗҫленнӗ ҫул 4 класс пӗтернӗ. Ашшӗн вилнӗ хучӗ 1943 ҫултах килнӗ пулин те кашни салтака уй хапхинче хирӗҫ чупса кӗтсе илнӗ, анчах шӑпа ӑна ашшӗ ытамне лексе текех юрату ӑшшине туйма пӳрмен.

Темӗнле йывӑр пулсан та амӑшӗ чун тӗпренчӗкӗсене вӗрентсе ҫӗр-шыва юрӑхлӑ ҫын тума тӑрӑшнӑ. Унӑн сӑмахне итлесех Н.Иванова ҫичӗ класс хыҫҫӑн Ҫӗрпӳри ял хуҫалӑх техникумӗнче тӑватӑ ҫул агронома вӗренет, тӑрӑшулӑхпа палӑрать. 1952 ҫулта хӗр Ҫӗрпӳ районӗнчи Чурачӑкри колхоза вырнаҫать. Пысӑк опытлӑ специалистсемпе 2 ҫул ӗҫлесе пӗлӗве практикӑра ҫирӗплетет.

Тӗпчев ӗҫӗ хистенӗрен-ши е ӑраскал турӑ ҫырнипе тӗл пултарма васкатнӑран-ши – шӑпа Нина Даниловнӑна 1954 ҫулта Элӗк районӗнчи Мӑн Тукташри ял хуҫалӑх культурисен сорчӗсене сӑнакан участока илсе ҫитерет. Кунта ҫӗнӗ сортсене висшер ҫул ӳстерсе, тухӑҫне ҫулсерен сӑнаса, тӗрлӗ чир-чӗре парӑнманнине тӗпченӗ хыҫҫӑн пур енӗпе те тивӗҫтерекеннисене хамӑр тӑрӑхра акма-лартма сӗннӗ. Унччен районти хуҫалӑхсем гектартан 15-17 центнер тыр-пул пухса илнӗ, вӑл ҫулсенче малтанхи хут вӑтам тухӑҫ – 20 центнертан, уйрӑм лаптӑксенче 25 центнертан та иртнӗ.

Патшалӑх комитечӗн сорт участокӗнче пысӑк опыт пухнӑ пултаруллӑ та пуҫаруллӑ Нина Даниловнӑна 1961 ҫулта районти вӑрлӑх тӗрӗслекен лабораторине аслӑ лаборанткӑна куҫарнӑ. Кунта та вӑл хамӑр районти хуҫалӑхсенче пӗрчӗллӗ тата пӑрҫа йышши культурӑсен пысӑк репродукциллӗ вӑрлӑхне акса-лартса ҫитӗнтерес тӗллевпе ырми-канми ӗҫлет.

Элӗк районӗ вӑл ҫулсенче республикӑра тыр-пул тухӑҫӗпе – ҫулсерен малтисен йышӗнче. Шаннӑ тивӗҫе тӑрӑшса пурнӑҫланӑшӑн 1969 ҫулта Нина Иванова Мускаври Халӑх хуҫалӑх ҫитӗнӗвӗсен куравне пӗрремӗш хут ҫитсе курать. Кунтан ҫӗннине нумай пӗлсе-вӗренсе килет. Хуҫалӑхсенче минерал удобренийӗсемпе тӗрӗс усӑ курмасӑр пысӑк тухӑҫ илме май ҫуккине ертӳҫӗсемпе агрономсене ҫине тӑрсах ӑнлантарать. Нина Даниловна 1977 ҫултанпа районти вӑрлӑх инспекцийӗн коллективне ертсе пырать. Ҫак тапхӑрта кирек мӗнле ҫанталӑкра агротехникӑна тӗрӗс пӑхӑннипе, пусӑ ҫаврӑнӑшне йӗркеленипе тата паха вӑрлӑх ҫеҫ акнӑран, пӗрчӗллӗ удобренипе пӗлсе усӑ курнӑран тыр-пул тухӑҫӗ палӑрмаллах ӳсет. Ҫакӑнта вӑрлӑх инспекцийӗн ертӳҫи пысӑк тӳпе хывни сисӗнет. Н.Иванова «Хисеп палли» ордена, тӗрлӗ шайри Хисеп хучӗсене тивӗҫет. Тивӗҫлӗ канӑва кайсан та опытлӑ специалист тата 5 ҫул пултаруллӑ кадрсем хатӗрлет.

Алӑ усма хӑнӑхман кинемей паян салари Турӑ амӑшӗн Успени чиркӗвӗнче – староста. Халӑхпа пӗрле пулса мӑшӑрӗпе ачине вӑхӑтсӑр ҫухатнӑ йывӑр хуйха пусарать.

■ **Людмила АНДРЕЕВА.**

Элӗк районӗ

*Ҫивӗч ыйту*

## Манас марччӗ, асра тытасчӗ

***Тӑван ҫӗр-аннемӗр сӗткенӗпе шӑварӑнса, ачаллах тӗрлӗ ӗҫе хӑнӑхса-пиҫӗхсе ҫитӗннисенчен чылайӑшӗ пурӑна киле вӑй-халне шеллемесӗр те вӑхӑт иртнине пӑхмасӑр ӗҫлесе ырӑ ята тивӗҫет. Ял-йышра чыс-хисеп, ят-сум ҫӗнсе илет. Ваттисем ахальтен мар мухтаса: «Ырӑ ҫыннӑн кӑмӑлӗ катса ҫиес сар ҫу пекех», – тенӗ сӑпайлӑн. Ҫапла та каланӑ: «Ырӑпа ют ҫын та тӑвана ҫаврӑнать».***

Манас марччӗ вӗсене пирӗн, вӑхӑт чуппи чылай хыҫа юлсан та аса илсе асра тытасчӗ, тӗслӗх илсе вӗсем пек маттур пулма тӑрӑшасчӗ. Сӗнтӗрвӑрри тӑрӑхӗнче те хастарлӑхпа палӑрнисем – вун-вун. Иртнӗ ӗмӗрӗн 90-мӗш ҫулӗсенче Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Чӑнкасси ял тӑрӑхӗн ертӳҫи Николай Кириллов ҫине тӑнипе Тури Кушмара ял уявӗ иртнӗччӗ. Вӑл ҫулсенче Ростислав Ярухин сывахчӗ-ха. Тӳрӗ кӑмӑлпа нумай ҫул хушши тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн Ростислав Максимовича «ЧАССР тава тивӗҫлӗ механизаторӗ» хисеплӗ ят панӑ. Ҫакна аса илтерсе тӑма вӑл пурӑннӑ ҫурт ҫине ял уявӗнче Асӑну хӑми вырнаҫтарӗҫ. Ҫак ялтах ҫуралса ӳснӗ, ҫар морякӗ пулнӑ Николай Титов-Тарават сӑвӑҫ пурӑннӑ пӳрт ҫине Асӑну хӑми ҫирӗплетнӗччӗ.

Вырӑнти совхоза нумай ҫул ӑнӑҫлӑ ертсе пынӑ Николай Ласточкин, уй-хир бригадирӗ пулнӑ Георгий Истоминпа мӑшӑрӗ /ятне ас тумастӑп/, Капитолина Кудряшова – ЧАССР ял хуҫалӑхӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗсем, Лев Рыбаков, Геннадий Хлебников ӑслӑлӑхҫӑсем, Петӗр Вашават, Станислав Куснар, Георгий Ефремов, Валерий Пайраш, Николай Давыдов поэт-ҫыравҫӑ, Орест Филиппов ӳнерҫӗ, ЧАССР тава тивӗҫлӗ механизаторӗ Виталий Хмелев... Пурин ятне асӑнса та пӗтереймӗн. Пултаруллӑ ентеш пирӗн тӑрӑхран чӑнласах нумай тухнӑ.

Ялсенче, вӗренӳ заведенийӗсемпе шкулсенче, культура учрежденийӗсенче пулатӑп та – ҫакна асӑрхатӑп: влаҫ тытӑмӗсенчисем те, тӗрлӗ шайри ертӳҫӗсем те маннӑ вӗсене, вилӗмсӗрлетме тӑрӑшмаҫҫӗ. Ҫавӑнпах ӗнтӗ пултарулӑх аннинче, халӑх хуҫалӑхӗн тӗрлӗ отраслӗнче палӑрса ҫутӑ йӗр хӑварнисене ҫитӗнекен ӑру вуҫех пӗлмест. Ял-йыш асӗнче юлччӑр тесе ҫуралса ӳснӗ ҫурчӗсем ҫине вун-вун ҫул каяллах Асӑну хӑмисем вырнаҫтарни ҫинчен маларах пӗлтертӗм-ха, анчах вӗсем кивелсе тӗссӗрленнӗ. Хӑма-фанерӑран тунисем ҫумӑрпа исленнӗрен сийленсе-уйрӑлса ҫухалнӑ. Вӗсене ҫӗнетекен никам та ҫук. Вырӑнти муниципалитетсем кун пирки мӗн шухӑшлаҫҫӗ-ши?

Чӑваш чӗлхипе литератури, тӑван ен культури урокӗсенче мухтава тивӗҫлӗ ентешӗсем ҫинчен мӗншӗн калаҫу хускатас мар? Ҫамрӑк авторсен кружокӗсенче те аса илсен вырӑнлӑ пулӗччӗ. Ачасене ырӑ тӗслӗхпе вӗсем пекех сатур пулма вӗрентесчӗ. Культура, пӗлӳ ҫурчӗсенче кӗтессем, стендсем йӗркелесчӗ. Манас марччӗ вӗсене, асра тытасчӗ.

■ **Анатолий АНИШОВ**

*Туслӑх кӗперӗ*

## Уэлен – инҫетре те, ҫывӑх та

***Ҫӗрпӳ тӑрӑхӗнче ҫуралса ӳснӗ, ҫамрӑклӑхне малтан Инҫет Хӗвел тухӑҫӗнче, кайран Чукотка наци округӗнчи Уэлен поселокӗнче иртернӗ Иван Павлов икӗ теҫетке ҫула яхӑнах Йӗпреҫ поселокӗнче пурӑнать. Вӑл кунта ҫемйипех куҫса килнӗ, ҫурт туяннӑ. Ачисем тахҫанах саланса пӗтнӗ. Юратнӑ мӑшӑрӗ виҫӗ ҫул каялла ҫӗре кӗнӗ. Ӗҫ ветеранӗ халӗ пӗчченех кун кунлать.***

Пӗррехинче хӑнана кӗрсен акӑ мӗн тӗлӗнтерчӗ: стена тӑршшӗпех вырнаҫтарнӑ шкапсенче кӗнеке – туп-тулли.

– Пӗчченлӗхе сирме пулӑшаҫҫӗ мана, – терӗ кил хуҫи, килнӗ ҫынна тӗпелелле иртме сӗннӗ май. – Хама вӗсемпе туслашма кам пулӑшнине пӗлетӗр-и? Вӑл – пӗтӗм тӗнчипех палӑрма ӗлкӗрнӗ чукча ҫыравҫи Юрий Рытхэу!

Чӑваш ҫынни унпа иртнӗ ӗмӗрӗн 50-мӗш ҫулӗсен варринче паллашнӑ. Вӑл ун чухне Лӑпкӑ океан флотӗнче хӗсметре тӑнӑ. Моряксем патне пӗррехинче ҫыравҫӑсен ушкӑнӗ килнӗ. Тӗл пулура Юрий Рытхэу та пулнӑ. Ӑна та сӑмах калама черет ҫитнӗ. Ҫамрӑк ҫыравҫӑ хӑйне шӑтарасла тинкерекен моряксене куҫ айӗн сӑнаса ҫапла ыйтнӑ: «Манӑн «Время таяния снегов» трилогие сирӗнтен кам та пулсан вуланӑ-и?» Телее, йышлӑ ушкӑнран Иван Павлов ҫеҫ аллине ҫӗкленӗ.

– Мана ҫавӑнтах алӑ пусса кӗнекине парнелерӗ, – ҫав саманта куҫ умне кӑларма кӑмӑллӑ пулни палӑрчӗ-тӗр: ентешӗн сӑнпитне ӑшӑ кулӑ иленчӗ. – Кайран та, тӗл пулу вӗҫленсен, вӑл манпа чылайччен калаҫрӗ. Хӗсмет хыҫҫӑн Чукотка тӑрӑхне ҫитсе курма чӗнчӗ.

Иван Павлов моряк тумне хывсан тӑван тӑрӑха таврӑнма васкаман-ха. Владивостокри апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗн институтне куҫӑнлӑ майпа вӗренме кӗнӗ. Диплом илсен ӑна Чукотка наци округӗнчи Уэлен поселокне янӑ. Кунта ҫав вӑхӑт тӗлне ҫӗнӗ пекарня ӗҫе кӗнӗ.

Уэлен – Юрий Рытхэун пӗчӗк тӑван ҫӗршывӗ. Акӑ ӑҫта илсе ҫитернӗ шӑпа чӑваш ҫамрӑкне! Иван Сергеевич каллех аса илӳ тӗнчине «путрӗ»: «Паллӑ ҫыравҫӑ тӑван поселокне тӑтӑшах килсе ҫӳретчӗ. Кашни хутӗнчех ентешӗсене кӑпӑшка ҫӑкӑрпа тивӗҫтерекен завод директорӗ патне кӗрсе тухма вӑхӑт тупатчӗ, хӑйӗн кӗнекисене парнелесе хӑваратчӗ. «Под сенью волшебной горы», «Чукотская сага», «В долине маленьких зайчиков», «Ленинградский рассвет», «Сон в начале тумана», «Иней на пороге», «Конец вечной мерзлоты», «Белые снега» кӗнекисене, халал сӑмахӗ ҫырса панисене, чи хаклӑ тупра вырӑнне хурса упратӑп». Ҫапла каларӗ те Иван Сергеевич шкапран «Под сенью волшебной горы» кӗнеке илчӗ, кирлӗ вырӑна шыраса тупса мана сасӑпах вуласа пама ыйтрӗ. Акӑ мӗн ҫырнӑ Юрий Рытхэу /вырӑслах илсе кӑтартатӑп/: «Русское слово «хорошо» мне представляется круглым, теплым, похожим на свежеиспеченую, только что вынутую пекарем Павловым из печи буханку хлеба. Возможно, это от того, когда пекарь, довольный своей работой, вынимая теплый хлеб и протяжно, со вкусом произносит: «Хоро-шо!»

«Ҫӑкӑр пӗҫерекен Павлов кам тетӗр-и? Вӑл – эпӗ, эпӗ! – пӗчӗк ача пек хӗпӗртенӗ Иван Сергеевич урисемпе пӗр вырӑнта тӑпӑртатса илчӗ. – Юрий Рытхэу мана Уэленри ашшӗ-амӑшӗ ҫуртне хӑнана темиҫе те чӗннӗ. Кӗрекере эпӗ Тихон Семушкин, Николай Шундик, Григорий Ходжер, Владимир Санги тата нумай ҫыравҫӑпа паллашнӑ. Чӑвашран пулнине пӗлсен ман умрах пирӗн паллӑ поэтсене – Петӗр Хусанкайпа Ухсай Яккӑвне аса илетчӗҫ. Юрий Рытхэу хӑй Ухсай Яккӑвне ытларах хисепленине пытармастчӗ. Эпӗ Ҫурҫӗре мухтаса ҫыракансемпе хӗрсе нимӗнле тавлашӑва та кӗмен. Чӑваш ҫыравҫисем ҫинчен сӑмах хускатсан шарламасӑр шӑп ларattӑм. Мӗншӗн тесен ун чухне Хусанкая та, Ухсая та вуласах кайман...»

Иван Сергеевич каланӑ тӑрӑх, вӑл Юрий Рытхэупа юлашки хут ҫыравҫӑ 60 ҫул тултарнине чысласа Уэлен поселокӗнче иртнӗ савӑнӑҫлӑ пухура тӗл пулнӑ.

– Культура ҫуртӗнче халӑх лӑк тулличчӗ, – аса илӳ ҫӑмхине малалла сӳтрӗ кил хуҫи. – Юбилейне вӑл 1990 ҫулхи пуш уйӑхӗн 7-мӗшӗнче иртерчӗ. Хӑй пуш уйӑхӗн 8-мӗшӗнче ҫуралнӑ. «Ҫак кун – хӗрарӑмсен, – терӗ ун чухне Юрий Сергеевич. – Сӑваплӑ куна темиҫе уяв туса пӗчӗклетес мар...»

Чукоткӑран куҫса килнӗренпе Иван Павлов унта пӗрре те кайса курман, Юрий Рытхэупа та ҫыхӑну тытман. Анчах массӑллӑ информаци хатӗрӗсем урлӑ анлӑ тавра курӑмлӑ та пултаруллӑ, хайлавсене чукчалла та, вырӑсла та ӑста ҫыракан писатель халӗччenех ӑнӑҫлӑ ӗҫлени ҫинчен пӗлсех тӑрать. Унпа паллашса туслашма шӑпа пӳрнӗшӗн чӗререн савӑнать.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

*Аптраман тавраш*

## Ҫине тӑрсан, ӳркенмесен...

***Николай Ерукова юлашки хут курнӑранпа вӑхӑт нумай иртрӗ. Пӗлтӗр ҫулла тӑван яла кайсан культура ҫурчӗ умӗнче пӗлӗшӗмпе тӗл пулма май килчӗ. Пӗр-пӗринпе пин-пин ҫулҫӑ сулхӑнӗнче чун каниччен сӑмахларӑмӑр.***

Ҫанталӑк каҫ енне сулӑннӑ пулсан та – ӑшӑ. Ҫывӑрма хатӗрленекен ҫил ачисем ывӑннӑ-ши – йывӑҫ тӑррисем хытса кайнӑн пачах та хускалмаҫҫӗ. Николай Андреевича куллен иртекен пурнӑҫ йывӑрлӑхӗсене епле парӑнтарни ҫинчен пӗлтертӗм.

Н.Еруков Вӑрмар районӗнчи Вӑрманкасра /каярах Энтриялӗпе пӗрлешсе ҫак ял ятне йышӑннӑ/ 1942 ҫулта кун ҫути курнӑ. Вӑрҫӑ хирӗнчен таврӑнайман ашшӗне курма ӑна тӳр килмен. Амӑшӗ Мария Никонорова ывӑлне пӗчченех ура ҫине тӑратнӑ, пурнӑҫӑн йывӑр ҫулӗ ҫине тухмашкӑн ӑс-тӑн пухма пулӑшнӑ. Йӗкӗт ял шкулӗнче вӑтам пӗлӳ илнӗ, комсомол путевкипе Саратов облаҫӗнчи чукун ҫул ҫине ӗҫлеме кайнӑ, урине амантсан каялла таврӑннӑ.

Николай Андреевич пуҫне усман. Хастарлӑхпа пултарулӑхне кура ӑна пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхра уй-хир бригадине ертсе пыма шаннӑ. Бригада тухӑҫлӑ тыр-пул ҫитӗнтерсе ҫулсерен малти вырӑнсенчен пӗрне йышӑннӑ. Хӑмла плантацийӗ те япӑх мар тупӑш панӑ. Ӑста ҫӗр ӗҫченӗ хаклӑ парнесемпе тав хучӗсене ҫине-ҫинех тивӗҫнӗ.

Ӗне фермин ертӳҫине ҫирӗплетсен те хӗрӳ чӗреллӗ ҫамрӑк выльӑх йышне ӳстернӗ, дояркӑсем сӗт ытларах сума тытӑннӑ.

Шел те, ҫӗн йӗркелӳ хумӗ совхоза та пырса ҫапрӗ. 9 ялтан тӑраканскер виҫӗ колхоза пайланчӗ. Суту-илӳ экономикин самանинче хаксене ирӗке янӑран, пысӑк налуксем хунӑран вӗсем панкрута тухрӗҫ. Уй-хире ҫум курӑк пусса илчӗ. Ҫынсем ӗҫсӗр тӑрса юлчӗҫ. Ҫемьене тӑрантармалӑх укҫаллӑ пулмашкӑн ӗҫ шыраса ҫӗр-шыв тӑрӑх саланчӗҫ.

Николай Еруков хальхинче те ҫухалса каймарӗ. Район центрӗнче хӑйне тивӗҫтерекен вырӑн тупрӗ, кунтах тивӗҫлӗ канӑва тухрӗ. Халӗ мӑшӑрӗпе Галинӑпа тӑван ялта тӗпленсе пурӑнаҫҫӗ. Картиш тулли выльӑх, кайӑк-кӗшӗк усраҫҫӗ. Ӗҫ тӗлне пӗлсе ҫитӗннӗ ачисем пиллӗкӗшӗ те пурнӑҫ ҫулӗ ҫине ҫирӗппӗн пуснӑ. Улми йывӑҫҫинчен аякка ӳкмен. Пурте ҫемьеллӗ.

Йӗппи хыҫҫӑн ҫиппи тенешкел – 4 хӗрӗ те качча кайса ҫӗр-шывӑн тӗрлӗ кӗтесӗнче тӗпленчӗ. Ывӑлӗ Сергей ҫар тивӗҫне пурнӑҫланӑ хыҫҫӑн нефть кӑларнӑ ҫӗрте пӗр хушӑ ӗҫлерӗ. Шӑпа тӑван ял хӗрӗпе Надеждӑпа тӗл пултарсан мӑшӑрланса Энтриялӗнче уйрӑм пурӑнма кирпӗчрен икӗ хутлӑ ҫурт хӑпартрӗ. Кашни ачан хӑйӗн пӳлӗмӗ пултӑр терӗҫ. Ҫывӑхри ялсенче центрсем уҫрӗҫ, суту-илӳ усламҫисем пулса тӑчӗҫ. Хӑшӗ-пӗри пек: «Ялта ӗҫ ҫук», – тесе нихҫан та нӑйкӑшман Сергей Николаевич. Ашшӗ те ҫаплаччӗ. «Аптраман тавраш йӑхӗнчен пулӗ эсӗ», – шухӑшлаттӑм ӑшӑмра хӑш чухне.

Кӑмӑл пулсан, ҫине тӑрсан тата ӳркенмесен ялта та чиперех пурӑнаятӑн.

■ **Александр ВИШНЕВСКИЙ**

*Ыйту-хурав*

## Ҫулҫӑ хӗрри хӗрелет...

**Хула хӗрринчи пысӑках мар садра улма-ҫырла, йывӑҫ-тӗм чылай ҫитӗнтеретӗп. Пасартан пули-пулми ҫимӗҫ /ара, ӑна епле майпа туса илнине пӗлместпӗр-ҫке/ туянас марччӗ, ачасемпе мӑнуксене экологи енчен тасипе савӑнтарасчӗ тесе минерал удобренийӗпе вуҫех усӑ курмастӑп. Хаклӑ тӑнӑран тислӗке те темиҫе ҫулта пӗрре ҫеҫ тӑкатӑп. Ытларах чухне люпин е клевер, тепӗр ҫулхине вика е пӑрҫа ӳстерсе ана ҫинчех вӗтететӗп, чавса тӑпра айне тӑватӑп. Йывӑҫ-тӗме тутлӑхлӑ япалапа апатлантаратӑп пулин те ҫулҫӑ хӗрри хӗрелет. Ҫакӑ мӗнпе ҫыхӑннӑ, мӗн тумалла вӑл пӗттӗр тесен?**

**П.ИВАНОВ.**
Шупашкар хули.

Тӑпрана ешӗл ӳсен-тӑранпа пулӑхлатни, тытӑмне лайӑхлатни пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Шел те, вӗсем ҫӗре ҫӑмӑллӑн ирӗлекен азотпа пуянлатаҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах ытти элемент ҫителӗксӗр. Ҫулҫӑ хӗрри хӗрелни кали ҫитменнипе ҫыхӑннӑ. Ӑна та, пӗрчӗллӗ ытти удобрение те хуҫалӑх лавккисенче ирӗклӗнех сутаҫҫӗ. 1 е 2 килограмлӑ пакетсенче инструкци те пур. Виҫеллӗ усӑ курни организмшӑн сиенлӗ мар.

Сире те, вулакансене те асра тытма ытти чирпе те паллаштаратпӑр. Ҫулҫӑсем малтан хӗрелеҫҫӗ, унтан хӗрлӗ-кӑвак тӗс сӗмӗ ҫапсан, кайран хуралаҫҫӗ пулсан – фосфор, ҫулҫӑсенче ҫутӑ симӗс пӑнчӑсем палӑрсан – магни, папка татӑлса ӳксен тата тымар хӑрсан – кальци, ҫулҫӑ вӗҫӗ шуралсан тата ҫавӑн пекех йывӑҫ-тӗм тӑрри, турат вӗҫӗ хӑрсан – пӑхӑр, ҫимӗҫ тӗвви е чечек татӑлса ӳксен бор ҫитмест. Азот сахал чухне ҫулҫӑсем вӗтӗ те шуранкарах пулаҫҫӗ, туратсем япӑх ӳсеҫҫӗ.

Вӑйлӑ чирлекен йывӑҫ-тӗме сыввипе улӑштарсан лайӑхрах. Вӗсене ҫӗнӗ вырӑнти тӑпрана лайӑх ҫӗрнӗ тислӗкпе е компостпа /вӗсенче тутлӑхлӑ тӗрлӗ япала пур/ апатлантарнӑ хыҫҫӑн ҫеҫ лартӑр.

Хаклӑ пулсан та органика удобренийӗ кирлех. Унпа перекетлӗ усӑ курӑр, ҫӗрнӗ вӑхӑтра тутлӑхлӑ япаласем ҫухаласран пленкӑпа витӗр, кӑштах тӑпрапа хуплӑр. Ҫӗрӗк тӑприне лаптӑкра талккӑшӗпех ан сапалӑр /ҫум курӑка мӗншӗн апатлантармалла?/, вӗтетсе йывӑҫ-тӗме – тавралла, йӑрансене тата ретсем тӑрӑх сапӑр.

**Кӑларӑма Валентин ГРИГОРЬЕВ хатӗрленӗ.**

*Йĕр тăрăх*

# Вăрманта çапла пулнă...

***Унтанпа 4 çул ытла иртнĕ те – арçын çухални пирки хăшĕсем манма те ĕлкĕрнĕ пуль. Тăванĕсем, паллах, манман. Тата – сыщиксем, вĕсем çак тĕслĕхпе информацие пĕрчĕн-пĕрчĕн пухнă, Следстви комитечĕн республикăри управленийĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсене тĕпчекен пайĕ ÿкерчĕке тинех туллин уçăмлатнă.***

Коммерци организацийĕсенчен пĕрин юрисконсультĕнче ĕçлекен 46-ри Зуфар Сайфутдинов тата 25-ри Михаил Чумерин тĕлĕшпе айăплав тăратнă. Иккĕшĕ те – Шупашкарсем. Вĕсене Уголовлă кодексăн темиçе статйипе айăплаççĕ: каварлашса пурлăх вăрланăшăн, ют паспорта вăрласа сиенленĕшĕн. Сайфутдиновăн унсăр пуçне çын вĕлернĕшĕн тата хурахла тапăнушăн явап тытма тивет, Чумеринăн – уйрăмах йывăр преступление пытарнăшăн.

Тискер ĕç 2009 çулхи кĕркунне пулнă. Юпа уйăхĕн 22-мĕшĕнче Сайфутдинов 69 çулти пенсионерпа пĕрле Чул хулана кайнă – ватă çыннăн «Газпром» акцийĕсене сутас тенĕ. Зуфар маларахах хăрушă план хатĕрленĕ: çула тухас умĕн хăйĕн пĕлĕшне М.Чумерина Етĕрне районне пыма, М-7 автотрасса çумĕнчи вăрман тăрăхĕнче хăйсем кÿршĕ облаç тĕп хулинчен таврăнасса кĕтме сĕннĕ. Чăн та, Михаила хăй уйрăмах йывăр преступлени тума хатĕрленни пирки шарламан.

...Каласса татăлнă çĕрте курнăçнă. Чумерин хăйĕн автомобилĕ чăхăмлани пирки пĕлтерсен Сайфутдинов ăна юсамашкăн хайхи пенсионера чĕнсе илме хушнă. Ку, паллах, ватă çынна улахрах вырăна илсе кĕмелли сăлтав кăна пулнă. Зуфар пенсионерпа хирĕçсе кайнă, ăна майĕнчен пăявпа çавăрса илнĕ те пăвса пăрахнă. Унăн кĕсйинчен акцисем сутнăшăн илнĕ укçана – 1 млн тенкĕ ытла – кăларса хăйĕн кĕсйине чикнĕ.

Халь преступлени йĕрĕсене пытармалла. Сайфутдинов Чумерина вилле чавса чикмешкĕн пулăшма сĕннĕ. Машинăра кĕреçе пур – çамрăк çын килĕшнĕ. Инçе кайман, шаларах кĕнĕ çеç. Михаил çакăнтах, вăрманта, пĕр метра яхăн тарăнăш шăтăк чавнă. Арçын ÿтне унта пăрахиччен ун çумĕнчи икĕ кĕсье телефонне, паспортне кăларса илнĕ. Шăтăка хупланă. Паспорта çунтарса янă. Пулчĕ – кунта мĕн пулса иртнине никам та тавçăраймĕ...

Пенсионер çухални çинчен право хуралĕн органĕсене унăн тăванĕсем пĕлтернĕ. Чылай вăхăт уçăмлăх пулман, анчах хыпарсăр çухалнăскере шырама пăрахман. Оперативниксем вăл çухални криминалпа çыхăнма пултарнине кăтартакан информаци илнĕ. Çавăн хыççăн пушшех çине тăрса ĕçленине кура следовательсем преступниксен йĕрĕ çине ÿкме пултарнă.

Чăн та, Чумерин малтан пĕтĕм айăпа хăйĕн çине илнĕха. Апла пулин те арçынна ăçта чавса чикнине тÿрех тупма май килмен. Вăхăт нумай иртнине кура вăрттăн вил тăпри куракĕмпе хупланма та ĕлкĕрнĕ вĕт. Следстви пур пĕр алă сулман, психофизиологи тĕпчевĕсем те ирттернĕ – арçын виллине тупнă-тупнах. Тĕрĕсрех калас тăк – унăн шăмми-шаккине. Ăна пăвнă вĕрен татăкĕ те – майĕнчех... Çакăн хыççăн тинех преступлени ÿкерчĕкне туллин уçăмлатнă, «Газпром» акционерĕ пулнăскере чăннипе кам вĕлернине те палăртнă.

Следстви шухăшĕпе – Сайфутдиновпа Чумерин айăпне ĕнентерме материал çителĕклĕ пухнă. Çавна май уголовлă ĕçе суда ярса панă – ăна республикăн Аслă судĕнче тишкерĕç.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

*Аса илÿ*

# Çĕмĕрт пиçсен

Ял варринче – кивелсе шултăрканă хурал пÿрчĕ. Унпа вĕçе-вĕçĕн – пушар сарайĕ. Унăн айĕнче – насуслă урапа. Витере пушар лаши утă çисе тăрать. Пире, ачапчана, пушарнăйсен пуçлăхĕ сарайне кĕрсе çÿреме чарать. Хурал пÿртне кĕме юрать-ха. Кунта кăвак сухаллă, типшĕм ÿтпÿллĕ лутра старике ялан тенĕ пекех курма пулать. Ку вăл Тиття пичче, ял хуралçи. Унăн мăнукĕ Алюш пирĕнпе пĕрле чухне эпир хурал пÿртне шикленмесĕрех кĕретпĕр. Скворцов Алюш шкулта тăваттăмĕш класра вĕренет, манран виçĕ çул аслăрах. Тÿлек кăмăллă, калаçма юратакан, лара-тăра пĕлмен вăр-вар ача вăл. Пысăк мар хурал пÿрчĕ Тиття пичче чĕлĕмĕн тĕтĕмĕпе тулса ларнă пулсан та эпир кунтан тухса кайма васкамастпăр. Вăл юмах-халап яма ăста, кăсăклă япаласем çинчен каласа пама юратать. Хăй кăна мар, пире те калаçтарать. «Керменĕнче» пире вăрах лартмасть. «Айта, кайма вăхăт. Атту сире кунта сĕрĕм те тивĕ. Аннĕрсем килте кĕтсе те ывăнчĕç пулĕ, хырăмăрсем те выçрĕç ĕнтĕ», – текелесе ăсатса ярать.

Эпир киле кайма васкамастпăр. Алюш тăм шăхлич тума пĕлет. Ăна ăсталама кăвак тăм кирлĕ. Пирĕн таврара ăна Масар çырми текен вырăнта анчах тупма пулать. Тăм шырама Алюшпа иксĕмĕр çырма еннелле чупатпăр.

Çитес эрне вĕçĕнче – Питрав. Питрав праçникĕ яланах пĕр кунта – утă уйăхĕн вун иккĕмĕшĕнче – пулнипе паллă. Уяв хыççăн хĕрсем вăййа тухма пăрахаççĕ, ĕççи пуçланать, халăх утă çулма пуçăнать.

Ахаль чухне вăйă Тукайра Хĕреслĕ урам текен вырăнти тÿпемре иртет. Вăййа хĕрсем хĕвел анмасăр пуçтарăнмаççĕ. Çуллахи çĕр кĕске. Вăйă картана тăнă хĕрсен юррипе пуçланать. Юрă пуçлаканĕ – манăн аттепе пĕр тăван Ахваниç тетен хĕрĕ Анюта аппа. Унăн сасси питĕ уçă, юрă сăмахĕсене те вăл аван пĕлет. Ахваниç тетене чĕррĕн эпĕ пĕрре те курман. Вăл вăрçăра пуç хунă, килĕнче инкепе икĕ хĕрĕ тата ывăлĕ юлнă.

Ах, питĕ хăвăрт иртет-çке вăйă. Вăл сехет çурă, икĕ сехетрен те ытла пымасть. Анюта аппа сывлăш çавăрса ярса пĕр юрă хыççăн теприне пуçлать. Халĕ юрра купăссăр е баянсăр юрламаççĕ. Вăйă юррисене нихăçан та купăс каласа юрламан. Вĕсем унсăррах çав тери хăватлăн, çепĕççĕн, вăйлăн янăратчĕç. Икĕ çухрăмри Çĕнĕ Мăрат çыннисем: «Тукай хĕрĕсем вăйăра юрлани пирĕн яла илтĕнет», – тетчĕç.

Çур çĕр те иртсе кайнă ĕнтĕ. Тепрер сехетрен кăвак çутă килмелле. Анюта аппа юлашки юррине пуçлать те: «Çирĕк çулçи çиле май, айтăр, хĕрсем, киле май», – тесе вĕçлет. Вăйă саланать. Йĕкĕтсем хăйсен савнийĕсене киле ăсатма васкаççĕ.

Ыран Питрав тенĕ чухне Тукай вăйçисем вăрманти масар леш енчи уçланкăра Мăрат вăйçисемпе тĕл пулатчĕç, пĕрле юрлатчĕç. Питрав кунĕ, кăнтăрла çитеспе, Тукай, Мăрат, Тимĕрчкасси, Шурут, Шурут-Нурăс хĕрĕсем, каччисем, пĕве кĕрсе пыракан çамрăксем, ача-пăча, ватă çынсем Тукайран тăватă-пилĕк çухрăмри Шурут катине пуçтарăнатчĕç. Лавкка сутуçисем лав çине тавар тиесе çав вырăна васкатчĕç. Ултă-çичĕ ял хĕрĕ икĕ-виçĕ е ытларах картана тăрса: «Вăййăн-вăййăн вайяшки – Питрав каçран юлашки», – тесе юрă пуçлатчĕç.

...Масар çырминче Алюшпа иксĕмĕр кăвак тăм чылаях чавса кăлартăмăр. Скворцовсем Пĕчĕк касра пурăнатчĕç. Килне çитнĕ-çитменех Алюш тăм çăрма пуçларĕ, шăхлич тума «чĕр тавар» хатĕрлет, Питрав вăййине, Шурут катине, мана та илсе каясшăн. Алюш эрне хушши шăхлич ăсталарĕ, типĕтрĕ, хĕртрĕ, сăрларĕ, «ши-ши кайăк-кĕшĕке» амăшĕ çĕлесе панă пĕчĕк хутаçа хучĕ. Вырсарни кун вăл Шурут катинче шăхлич сутса укçа тăвасшăн.

Кĕтнĕ кун ирхине ирех çула тухрăмăр. Тукайран Шурут катине выртакан чи кĕске çул – вăрманпа. Нурăс çулĕ текен прачакпа çав кун çуран çынсем те утатчĕç, кÿлнĕ лавсем те куçатчĕç. Эпир çула тата та кĕскетес терĕмĕр, сукмак çине кĕтĕмĕр.

Сукмак йывăççен хушшипе кукăрăлса тăсăлать: çăка, ăвăс, хурăн, чăрăш хыçа юлаççĕ. Сасартăк инçе те мар çулçă палăрми хуп-хура çырлапа витĕннĕ йывăç курăнса кайрĕ. Çĕмĕрт! Утă уйăхĕн варри – çĕмĕрт пиçсе çитнĕ вăхăт. Халĕччен никам пырса перĕнмен лаштра йывăçăн турачĕсене йăлтăртатса тăракан хура çĕмĕрт çырли хупланă.

Çав кун эпир Шурут катине çитеймерĕмĕр, вăхăта йывăç çинче çĕмĕрт çисе иртттертĕмĕр. Алюш кайран «ши-ши кайăксене» ял ачисене валеçсе пачĕ.

Алюшăн ĕмĕрĕ кĕске пулчĕ. Амăшне ялта Энтрюш арăмĕ тесе чĕнетчĕç. Ашшĕ, Андрей Титович Скворцов, 1942 çулхи çурла уйăхĕнче нимĕç фашисчĕсемпе çапăçса пуç хунă. Алюш вăл вăхăтра тин çуралнă ача çеç пулнă-ха.

Алексей Андреевич Скворцов Аслă Чурачăкра вăтам шкул пĕтерчĕ, колхозра плугарьте тата трактористра ĕçлерĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсен вĕçĕнче çÿллĕ çĕртен ăнсăртран ÿксе ĕнсе тымарне хуçрĕ. Ăна район больницине хучĕç, анчах сыватаймарĕç. Вилчĕ.

Ун чухне эпĕ райхаçат редакцийĕнче ĕçлеттĕм. Канмалли кунсенче вун пилĕк çухрăмри тăван яла кайма тăрăшаттăм. Чылай чухне çуранах утнă. Çуллахи пĕр шăмат кун Тимĕрчкассинчен Тукая Энтрюш арăмĕпе иксĕмĕр кайрăмăр. Ире хирĕç райцентрти больницăра Алюш вилсе кайнă-мĕн. Амăшĕн, йĕнипе, куçĕ шыçса тухнă. Вăл яла хăвăртрах çитесшĕн, лаша кÿлсе ывăлĕн ÿтне киле илсе килесшĕн. «Çамрăк-çке-ха, çирĕм улттăра кăна. Камăн вилес килтĕр? Куçĕ хупăниччен тăнне çухатмарĕ. «Чăваш кайрĕ, анне», – тесе вилчĕ», – ĕсĕклет Энтрюш арăмĕ.

Алюш вилнĕренпе кăçал хĕрĕх пилĕк çул çитет. Амăшĕ те, аппăшĕ Валя та çĕр çинче тахçанах çук ĕнтĕ. Тукай хĕрĕсем Хĕреслĕ урамра вăййа пуçтарăнма пăрахнăранпа та çур ĕмĕр ытла иртсе кайрĕ. Хальхи вăхăтра ялта пурăнакан хĕр çук. Вĕсем пурте хулара тĕпленнĕ. Ашшĕ-амăшĕ патне укçа, аш-какай, услам çу илме килсен ялти клубра пуçтарăнаççĕ, «буги-вуги» ташласа сирĕлми тусан çĕклеççĕ.

Çапах та вăйă илемне ăша хывса хăварнă хĕрарăмсем вилсе пĕтмен-ха. Вĕсем утмăлтан иртсе çитмĕле çитнĕ ĕнтĕ. Çамрăкраххисем те пур. Хулана каяймасăр ялта юлнă вăтăрти-хĕрĕхри хĕрарăмсене те сайра хутра курма пулать. Çĕр-çĕр çын хушшинче çирĕм-çирĕм пиллĕкри пĕр-икĕ хĕре те тĕл пулатăн.

Кăçал Республика кунне Каçал-Комсомольски тăрăхĕнче паллă тăвасси пирки Чăваш Ен Пуçлăхĕ указ кăларни çинчен халăх хушшинче хахать сарăлчĕ. Вăхăт хăвăрт иртет, уява хатĕрленме те тытăнаççĕ пулĕ ĕнтĕ. Вăййа та чĕртсе тăратасчĕ, çĕклесчĕ халăха. Питрав – чиркÿ праçникĕ. Халĕ чиркĕве хирĕç тăракан вăй çук, ÿркенменни кăна кирлĕ. Шурут кати халăх пынипе çĕнĕрен çĕкленмĕ-и? Тукай тата Шурут ял тăрăхĕсен администрацийĕсем кун пирки мĕн шухăшлаççĕ-ши? Вăхăт пур-ха, ĕлкĕрме пулать.

■ **Геннадий УТКИН.**
Комсомольски районĕ,
Тукай ялĕ

*Чĕнĕ кĕнеке*

# Чăваш чĕлхин тĕпчевçине халалланă

***Ăна, хитре хуплашкаллă, пысăках мар «чун çимĕçне», Владимир Ивановпа Елена Толстова «Немецкий исследователь чувашского языка академик Йоханнес Бенцинг» ят панă. Кĕнекене нимĕç ăсчахĕ çуралнăранпа 100 çул çитнине халалланă. Пĕчĕк мăйăрăн тĕшши тутлă тенешкел – асăннă кăларăм та хăйне хисеплекен кашни чăвашах тыткăнламалла.***




Унта авторсем хăй вăхăтĕнче чăваш чĕлхине тĕпченĕ Йоханнес Бенцинг /1913-2001/ пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнă. Чăваш чĕлхинчи падежсене тĕпченĕ ĕçне нимĕçлерен вырăсла куçарса пичетленĕ. Паллă чĕлхеçĕ М.Р.Федотов И.Бенцинга чăваш чĕлхине тĕпчекенсен паллă 32 çын шутне кĕртнĕ. Хăй вăхăтĕнче нимĕç тĕпчевçи Шупашкарти гуманитари ăслăлăхĕсен институтне çырусем те янă. Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай та унран çыру илнĕ. Владимир Иванов профессора вара 1996 çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче Германире Бенцингăн килĕнче пулма, чăваш литературипе пуян библиотекипе паллашма тÿр килнĕ. «Бенцинг аллăма чылайччен чăмăртарĕ, куçран ăшшăн тинкерсе «чăваш, чăваш» тесе пăшăлтатрĕ. Вăл чăваш чĕлхине кăмăллани çакăнтанах палăрчĕ»,– çырать Владимир Александрович.

Йоханнес Бенцинг Берлин университетĕнче пĕлÿ илнĕ. Хăйĕн диплом ĕçне тĕрĕк тата перс чĕлхисемпе çыхăнтарнă. Вăл уйрăмах Вăтам Атăл тăрăхĕнчи тĕрĕк халăхĕсемпе кăсăкланнă. 1940 çултанпа чăваш чĕлхине çине тăрса тĕпченĕ. 1942 çулта «Чăваш чĕлхинчи падежсем» ĕçĕпе доктор диссертацийĕ хÿтĕленĕ. Вăрçă хыççăн Бенцинг Тюбинген хулинчи университетра тюркологи вĕрентнĕ. Гунн, пăлхар, чăваш тата ытти чĕлхене тĕпчесе нумай ĕç пичетленĕ. Ăсчах нимĕçле-чăвашла пысăках мар словарь те кăларнă. «Судьба» сăмаха вăл «шăпа» тесе мар, «турă çырни» тесе куçарнă. Çавăн пекех вăл чăваш фольклорĕпе, поэзийĕпе, прозипе интересленнĕ. Унăн вĕренекенĕсем чăвашсен ваттисен сăмахĕсен /пурĕ 5600/ пуххине, чăваш ялĕсен ячĕсен /пурĕ 3600 ят/ кĕнекине нимĕçле кăларнă. Çапла вара Бенцинг ăслăлăхра ырă йĕр хăварнă. Каларăшран пуян кĕнеке питĕ çăмăллăн вуланать.

■ **Роза АНАТОЛЬЕВА**

## Тем те пĕр

**Викториан тапхăрĕ /XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурри/ вăхăтĕнче Хĕвел анăçĕнче йĕркеллĕ çемьесенче тĕлĕнмелле йăлана тытса пынă – çемьен вилнĕ çыннисемпе пĕрле ушкăнпа ÿкерĕннĕ. Ÿкерчĕксене лайăх пахалăхлă пулччăр тесе çын вилсенех тунă. Вилнисене чи лайăх тумĕсене тăхăнтартнă, лартса ÿкерттернĕ. Вилнĕ ачасемпе уйрăмах нумай сăн ÿкерчĕк тунă. XIX ĕмĕршĕн кунта нимĕн тĕлĕнмелли те çук: мĕншĕн тесен çав вăхăтра ачасем вилесси питĕ çÿллĕ шайра пулнă.**

*Яваплăх*

# Директор суд умне тăрать

***Прокуратура «Йĕпреç районĕн Водоканалĕ» МУП директорĕ тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçпе айăплав пĕтĕмлетĕвне çирĕплетнĕ. 47 çулти Александр Иванова УК 204 статйипе /коммерци енĕпе сутăн илни/ айăплаççĕ.***

Малтанхи следстви тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх – Иванов муниципалитет предприятийĕн директорĕн должноçне йышăннă хыççăн пĕр уйăхранах преступлени тунă. Укçашăн çунни пĕтерет. «Водоканал» директорĕ пулнă май вăл çак предприяти пурлăхне туянакана пулăшнăшăн укçа илнĕ. Пĕр çын унран МУПăн ГАЗ-66 автомобильне хăйне 200 пин тенкĕлле сутма ыйтнă. Иванов вара çак машинăна туянас кăмăллисем татах пурри пирки пĕлтернĕ /чăннипех унашкаллисем пулман/, туянасах тесен хăйне укçан хавхалантарма сĕннĕ – 105 пин тенкĕ ыйтнă. Машинăсăр юласран шикленнĕскерĕн çак условисемпе килĕшме тивнĕ, автомобиле сутнине-туяннине ĕнентерекен килĕшĕве хăйĕнпе тунăшăн директора ыйтнă чухлĕ укçа панă.

Уголовлă ĕçе суда ярса панă ĕнтĕ.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**

*Ăсталăх*

# Трак ен Кулибинĕсем

***Пирĕн тăрăхри ялсенче ăста алăллă çын нумай. Мĕн кăна хатĕрлемеççĕ-ши вĕсем? Пĕри карçинкка-лăпă çыхать, тепри йывăçран кĕлетке касса кăларать, виççĕмĕшĕ техника енне туртăнать. Тăваттăмĕшĕ юнашарах пурăнсан та тепĕр чухне пушă вăхăтра вăл мĕнпе аппаланнипе кăсăкланмастпăр. Çак тĕрĕс марлăха пĕтерес тĕллевпе район администрацийĕн ял хуçалăх тата апат-çимĕç пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ Виталий Чаховскипе патшалăх технадзорĕн районти инспекцийĕн ертÿçи Юрий Иванов пуçарăвĕпе пуçласа «Трак ен Кулибинĕ – 2013» конкурс иртрĕ.***

Вырăнти Кулибинсем çав кун Красноармейски салинчи Васильев урамĕнче хăйсем ăсталанă техникăпа паллаштарчĕç. Чатукассинчи Артур Петров заводра кăларакан мотоблока хăйне кирлĕ пек çĕнетнĕ. Халĕ унпа прицеп кăкарса çÿреме меллĕ. Ямакри Андрей Федоров килтех мини-трактор ăсталанă. Килтĕрĕшри ĕçе пурнăçлама юрăхлă. Çак ялти Эдуард Яковлев мотоболотоход – квадроцикл майлаштарнă. Сăмах май, ку – унăн пĕрремĕш ĕçĕ мар, «техника паркĕ» майĕпен пуянлансах пырать. Пулайкасси ялĕнчи Анатолий Ефремов та тимĕр-тăмăрпа аппаланма кăмăллать, вăл хăй пуçтарнă кустăрмаллă трактора патшалăх регистрацийĕ витĕр те кăларма пултарнă. Кунтах – утă кĕрепли, плуг, культиватор тата ытти агрегат.



*● Эдуард Яковлев хăй ăсталанă квадроциклпа.*

Красноармейски ялĕнчи Сергей Хитрин хăй вăхăтĕнче Китайра тунă пĕчĕк трактор туяннă, ытти механизмпа агрегата, вăл шутра – прицеп, çĕр улми кăлармалли хатĕр, хăй ăсталанă. Халĕ сажалкăна пухса çитересшĕн. Пшонкăри Юрий Ильин чылай вăхăт инженерта ĕçленĕ, район депутачĕ те. Юрий Алексеевич та ăста алăллă, тăванĕсем пулăшнипе кустăрмаллă трактор пуçтарнă, ун хыçне утă-улăм рулонĕ тиемелли хатĕр çакнă. Йÿçкассинчи Станислав Владимиров – тивĕçлĕ канура. Килĕнче пуян мастерской пур. Токарь станокĕ вырнаçтарнăран чылай пайпа детале хăех ăсталать. Кустăрмаллă тракторпа, юр çÿренпе тата косилкăпа мухтанма пултарать. Кĕçех вездехода пуçтарса пĕтерĕ.

«Трак ен Кулибинĕ – 2013» конкурс йĕркелÿçисем Станислав Германовичпа çÿлерех асăннă ăстасене Дипломпа, хаклă парнепе чысларĕç. Кăçалхи тупăшăва хутшăнакансен шучĕ ÿсес шанăç пысăк.

■ **Виктор ДАНИЛОВ.**
Красноармейски районĕ.
Автор сăн ÿкерчĕкĕ

*Хÿтлĕх*

# Яваплисем явапсăр та...

***Ял тăрăхĕсен администрацийĕсенче ĕçлекенсем хăйсен территорийĕсенче пурăнакансен ыйтăвĕсене татса парассишĕн яваплă. Çакна шута илмеççĕ тĕк – район прокуратурин хушша кĕме тивет.***

Шăпах прокуратура çине тăнипе Тăвай районĕнче пурăнакан Д. çемйи çурт-йĕр тума /туянма/ субсиди илмелли черете тăма пултарчĕ. Хĕрарăм çапла тума ыйтса çырнă, анчах Турикас Тушкил ял тăрăхĕн администрацийĕ заявление вăхăтра регистрацилемен. Çавна май асăннă çемье укçа илмелли черетре 3 çул малалла куçайман.

Çавăн пекех Тăвай районĕн социаллă хÿтлĕх пайĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă салтакăн тăлăх арăмне пурăнмалли çурт тума е туянма укçа парассине хирĕçленĕ тĕслĕхре те кинемей хутне кĕме тиврĕ. Прокурор ыйтнипе социаллă хÿтлĕх пайĕн должноçри яваплă çыннине дисциплина енĕпе явап тыттарнă.

Çĕнĕ Пуянкасси ял тăрăхĕн администрацийĕ те Ж. прависене пăснă. Çамрăк специалист хăйне федерацин тĕллевлĕ «Ялăн 2013 çулччėнхи социаллă аталанăвĕ» тĕллевлĕ программипе килĕшÿллĕн çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмашкăн шута илме ыйтнă. Анчах администрацире заявление пăхса тухман, çырса хурав паман. Çавна пула Ж. вырăнти влаç йышăнăвĕ тĕлĕшпе суда тавăç та тăратайман. Район прокуратури ял тăрăхĕн пуçлăхĕн ячĕпе представлени çырчĕ. Ăна тишкернĕ хыççăн Ж.-на тинех пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмаллисен черетне тăратнă. Администраци ĕçченне дисциплина енĕпе явап тыттарнă.

■ **Оксана ЯСТРЕБОВА,**
**Тăвай районĕн прокурорĕ**

*Курав*

# «Симаков художник тата ачасем»

***Çак ятпа Чăваш патшалăх ÿнер музейĕнче курав уçăлчĕ.***

Александр Симаков – классика йăлисене тĕпе хурса ĕçлекен художник, живописец. Тематика картинисем, портрет, пейзаж, натюрморт – вăл юратнă жанрсем. Унăн произведенийĕсем Чăваш патшалăх ÿнер училищинче, Третьяков галерейинче тата Италири, Германири, Болгарири, Англири, АПШри, Китайри коллекционерсем патĕнче упранаççĕ. Александр Иванович – пултарулла педагог та. Вăл шкулта, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ ÿнер-графика факультетĕнче вĕрентнĕ. Республикăри ачасен ÿкерчĕкĕсен куравĕсене йĕркелет.

«Симаков художник тата ачасем» куравра Шупашкарти трактор завочĕн строительствине мĕн пуçламăшĕнчен /1970 çулсем/ сăнлакан картина-çулçыравсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. «Продотряд в Чувашии» ярăм 1917 çулхи Аслă революци вăхăтĕнчи кăра кунсене, çĕр-шывра, Чăваш Енре пулса иртнĕ пĕлтерĕшлĕ пулăмсене сăнлать.

Хальхи вăхăтра художнике анлă Атăл илĕртет. Вăл «Юхать Атăл» картинăсен ярăмĕпе ĕçлет. Кунта Александр Иванович аслă шыв хĕрринче ĕçлесе пурăнакан пултарулла, ырă кăмăллă çынсем, чăвашсен авалхи тата хальхи йăли-йĕрки, культури пирки каласа кăтартасшăн.

Экспозицие çавăн пекех ачасен конкурса тăратнă ÿкерчĕкĕсем те кĕнĕ. Конкурс йĕркелÿçисем – Чăваш Республикинче «Ясна» экологи хутлăхне уçакансем. Пĕлтĕр вĕсем сăнав ирттернĕ, шыв мĕн чухлĕ вăрттăнлăх упранине уçăмлатнă. Республикăри 60 ытла ача парнесене тивĕçнĕ. 2013 çулта конкурса 200 ытла ÿкерчĕк тăратнă. Чи лайăххисене суйласа илсе курав йĕркеленĕ. Унпа ÿнер музейĕнче паллашма пулать. Конкурс жюрийĕн председателĕ – Александр Симаков. Çак сĕнĕве вăл хапăлласа



йышăннă. Хăй каланă тăрăх – шкул ачисен ÿкерчĕкĕсем профессионала хавхалану кÿреççĕ. Ара, пĕчĕккисем уçă чунлă, тÿрĕ кăмăллă, вĕсен пултарулăхĕ таса та çутă...

■ **И.СЕРГЕЕВА**

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерÿ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ.

*Саламлатпăр*



***Хаклă та юратнă мăшăра, аттене, асаттене – Етĕрне районĕнчи Мăн Явăш ялĕнче пурăнакан <u>Владислав Васильевич КАССИРОВА</u> – сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн, ăшшăн саламлатпăр, ырлăх та телей сунатпăр.***

*Çĕкленÿллĕ пултăр кăмăлу*
*Вăй-хал чунра*
*ялан вĕретĕр.*
*Сывлăхпа ăнăçу яланах пĕрле çÿреччĕр.*

***Саламлаканĕсем мăшăрĕ, ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕсем.***

Администрация Красночетайского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве собственности с кадастровым № 21:15:190104:115, местоположение: Чувашская Республика, Красночетайский район, Питеркинское сельское поселение, земельный участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:15:190104 для сельскохозяйственного производства, площадью 2539 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429040, село Красные Четаи, пл. Победы, дом 1 (здание администрации), кабинет №306 с 8-00 до 17-00 час. Ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок 8(83551)2-13-55.

Администрация Чебоксарского района извещает о намерении предоставить в аренду сроком на 10 лет земельный участок площадью 2,1144 га с кадастровым номером 21:21:000000:6812, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Шинерпосинское сельское поселение (земли сельскохозяйственного назначения), для сельскохозяйственного производства. Заявления и письменные возражения принимаются администрацией Чебоксарского района с 22.01.2014 по 21.02.2014 г. по адресу: 429500, Чувашская Республика, Чебоксарский район, пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15 (каб. 20).Телефон для справок (8-83540) 2-40-82.

Ядринская районная администрация Чувашской Республики согласно постановлению № 06 от 13.01.2014 снимает лот № 2 с аукциона, назначенного на 21.01.2014г.

Ядринская районная администрация Чувашской Республики информирует о наличии свободного земельного участка с кадастровым номером 21:24:120304:10, предоставляемого в аренду сроком на 3 (года) категории "земли сельскохозяйственного назначения", расположенного по адресу: Чувашская Республика, Ядринский район, в центральной части кадастрового квартала 21:24:120304, площадью 40000 кв.м. для сельскохозяйственного производства.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования объявления по адресу: Чувашская Республика, г. Ядрин, ул. 30 лет Победы, д. 1, каб. 215, с 8-00 ч. до 17-00 ч. в рабочие дни. Тел.: 8(83547)22433.

## ПРОДАЮ

**33.Гравмассу,** песок, **керамзит, щебень, торф.** Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

## РАБОТА

**31.В Моск. обл. требуются:** упаковщицы, комплектовщики, грузчики. Граждане РФ, без в/п. ВАХТА. Предоставляется общежитие, оформление по ТК. Тел.: 8-965-445-11-47, 8-965-445-11-48.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ĕçченĕсем А.А.Вахтĕркинан

**амăшĕ**

вилнĕ пирки тăванĕсемпе пĕрле чун-чĕререн хурланнине пĕлтереççĕ.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, “ХЫПАР” ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор служубин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
“Хыпар” индексĕ – 54800, “Хыпар”-шăмат кун” – 78353, “Çамрăксен хаçачĕ” – 54804, “Чăваш хĕрарăмĕ” – 11515, “Сывлăх” – 11524, “Кил-çурт, хушма хуçалăх” – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор В.Н.БАГАДЕРОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, “ХЫПАР”.
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренÿ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерÿсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: pop408@rambler.ru hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРÿСЕНЕ 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн “Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, “Самана таппи”, “Компетентлă” рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7871. Заказ 83.